ЧУ-12У

Хветĕр Уяр



# УПА

# Упа

*(Партизан калавĕ)*

Ку ĕç Днепр леш енчи вăрмансенче пулса иртсеччĕ. Пирĕн пĕр вăхăтра çимеллисем пĕтсе çитрĕç. Эпĕ командир патне пытăм та, йывăçсем хушшинелле тĕллесе кăтартрăм.

— Мĕнле шутлатăр? Пĕр-пĕр кайăк-кĕшĕк тĕл пулмĕ-ши унта? Эпĕ ĕлĕкрех сунарçăра та çӳресе курнă. Ирĕк парăр-ха вăрмана шаларах кайса çӳреме.

Командир пĕр сăмахсăрах килĕшрĕ.

Хусан тутарне Хайруллин юлташа ертрĕм те, вăрманалла кĕрсе кайрăмăр. Часах çырма курăнчĕ. Нумаях та утманччĕ, таçтан туратсем хуçăлни илтĕнме пуçларĕ. Пăхатпăр та — упа, аça çапасшĕ! Çăмламас хура упа. Пирĕн умранах хăшăлтатса иртсе кайрĕ. Тĕлĕнсе кайнипе эпир винтовкăсем çинчен те мансах кайнă.

Малалла мĕн пуласса пăхса выртатпăр. Упа тӳрех шыва сикрĕ. Варри тĕлне çитсе пĕр чул çине тухса ларчĕ те малти урине тăратрĕ.

Шăнса çыпăçнă пекех пĕр хускалмасăр ларать хăй.

Ак тамаша!

— Ку опа охмаха тохнă полмалла, — тет Хайруллин.

Анчах упа мĕн хăтланнине часах ăнланса илтĕмĕр. Вăл, пирĕн пекех, хырăмне тăрантма тухнă иккен. Алтуйи тытнă пек, урине çĕклесе ларчĕ-ларчĕ те, шыв çине çат! çапрĕ. Пăхатпăр — уланкă. Хыпса çăтрĕ те — каллех урине çĕклерĕ. Тытать те çиет, тытать те çиет. Унтан тăранчĕ пулас — запас тума пуçларĕ. Тытать те хăй айне хĕстерсе хурать, тытать те — хăй айне хĕстерет. Вир пĕрчи пек çеç курăнакан пĕчĕк куçĕсемпе хăй шăтарас пек пăхса ларать шыв çине.

Пулăçă темерĕн, э!

— Çитет, — терĕ пулас хайхискер. Çĕкленчĕ те пуллисене илме кармашрĕ. Пăхать — чул çинче яп-яка. Çĕкленнĕ чух пуллисем шыва ӳкнĕ те — юхса кайнă. Тарăхнипе кăшкăрса ячĕ вĕт

çак айван пулăçă. Пуçне малти урисемпе тытса сулланса кăшкăрать.

Эпир Хайруллинпа иксĕмĕр хырăмсене тытса кулатпăр.

Çыран хĕррине тухсан, Мишкă-тус кăштах шухăшласа тăчĕ. Пĕрре утма та хăтланса пăхрĕ вăл. Унтан труках каялла çаврăнчĕ те эхлеткелесе-мехлеткелесе каллех паçăрхи чул çине пырса ларчĕ.

Хальхинче питĕ те хаяррăн ĕçлерĕ вăл: пулăсене тытнă-тытманах пуçĕсене çыртса татса илет те — çыран хĕррине ывăтать, тытать те — çыран хĕррине. Чылаях тытса купаларĕ çак сунарçă. Вара типĕ çĕре тухса пуллисене пĕр çĕре пуçтарчĕ те, чулпа хупларĕ. Йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ.

Шанчăклă.

Кăмăлĕ тулчĕ пулас, путек пек тăвată урине те харăссăн çĕклесе пĕрре транк! сиксе илчĕ те, йывăççем хушшинелле йăраланса кĕрсе çухалчĕ.

Çак çăмламас пулăçа темиçе хут та персе ӳкерме майĕ пурччĕ ĕнтĕ. Анчах ăна вĕлерме пирĕн ниепле те аласем çĕкленмерĕç. Эпир унăн пуллисене илтĕмĕр те, юлташсем патне таврăнса, питĕ те чаплă шӳрпе пĕçерсе çирĕмĕр.

Цена 50 коп.

*ФЕДОР УЯР*

# *Медведь*

На чувашском языке

Редактор **Кузьма Чулгась**

НТ 00192. Подписано к печати 16-VI-44 г. Заказ 1095 Тираж 15.000 экз.
Типография № 1 Упр. полиграфпром. при СНК ЧАССР г. Чебоксары.